Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...

ХЫПАР

ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

95 (2408) №
Хакĕ ирĕклĕ

2013,
раштав, 6

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ **КИЛ** ХЎТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

ÇĔНĔ ЯЛ – ÇĔНĔ ШАЙ

Патшалăх пулăшăвĕпе

2006 çулта çĕр-шывра ял хуçалăхне пулăшма «АПК аталанăвĕ» наци проекчĕ йышăнчĕç. Кайран вăл патшалăх программи пулса тăчĕ. Çавна май отрасле тепĕр хут вăй кĕчĕ, çĕнĕ фермăсемпе комплексем уçăлма тытăнчĕç, машинăпа трактор паркĕ хăватлă техникăпа пуянланчĕ. Çичĕ çулта республикăра 160 выльăх-чĕрлĕх объектне çĕнĕрен тунă е юсанă. Сысна, чăхчĕп ĕрчетесси уйрăмах аталанчĕ. Агропромышленноç секторне пĕтĕмпе 44 млрд тенкĕлĕх инвестици явăçтарнă.

Иртнĕ çул çĕр-шывра «Фермер ĕçне пуçăнакан», «Хресчен (фермер) хуçалăхĕн никĕсĕ çинче çемье фермине аталантарасси» программăсене йышăннă май фермерсен йышĕ ўсме тытăнчĕ.

Хушма хуçалăхран фермера куçакан самай. Çакă патшалăх грант шучĕпе укçа парса пулăшнипе те çыхăннă. 2012-2013 çулсенче, акă, ферма тума кайнă тăкака саплаштарма 10 фермер (хресчен) хуçалăхне субсиди панă. Патшалăх пулăшăвĕн виçи 62,74 млн тенке çитнĕ, çав шутра федераци укçи – 40,7 млн, республикăн – 22,03 млн тенкĕ. Иртнĕ çул конкурспа – 3, кăçал 7 фермер хуçалăхне суйласа илнĕ. Вĕсем сĕт, аш-какай туса илеççĕ.

2013 çулта грант илнĕ Александр Бикулов фермер Чăваш Енре чи малтан çĕнĕ ферма хута янă. Пĕлтĕр конкурсра çĕнтернĕ М. Тагеев (Сĕнтĕрвăрри районĕ), Г. Атласкин (Комсомольски), Ю. Голубев (Пăрачкав) фермерсем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кĕске хушăрах пысăк фермăсем туса лартнă.

Йывăрлăхран хăрамасăр фермер ĕçне çамрăксем те кўлĕнеççĕ. Тĕслĕхрен, Çĕмĕрле районĕнчи Денис Харитонов çирĕмрех пысăках мар хуçалăха ертсе пыма тытăннă. Ăна тăванĕсем пулăшса пыраççĕ. Вăл, 990 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕскер, вырăнти пушă ларакан фермăна тепĕр хут выльăх-чĕрлĕхпе тултарнă.

Патшалăх пулăшăвĕпе техника паркне çĕнетекен сахал мар. 2012-20013 çулсенче ял хуçалăх техники – 38, ĕне выльăх 315 пуç (çав шутра сăвăнаканни 207) туяннă. Кăçалхи тăхăр уйăхра вунă çемье ферминче 31,3 млн тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Вĕсем çак тапхăрта 1,2 млн тенкĕ налук тўленĕ. Çемье фермисенче мăйракаллă шултра выльăх йышĕ 1289 пуç (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 64 процент ўснĕ), сурăх – 252 (137). Усă куракан çĕр лаптăкĕ 6,35 пин гектар. 77 ĕç вырăнĕ хушăннă.

КĔСКЕН

Чăваш Енри сунарçăсемпе пулăççен патшалăх служби республикăри паха тирлĕ чĕр чунсене – хăнтăр, шашкă, ăтăр тата ондатра – шута илнĕ. Пирĕн тăрăхра 1934 хăнтăр пурăнать иккен. Чи нумаййи – Улатăр (391 пуç), Йĕпреç (229), Пăрачкав (249), Çĕмĕрле (176) районĕсенче.

Асăннă служба кăçалхи 11 уйăхра сунарçăсем саккуна пăсса 5 кайăк хур, 4 хир сысни тата 2 пăши тытнине палăртнă. Шел те, хальлĕхе 2 хир сыснипе 1 пăши «хуçине» тупайман.

Чăваш Республикин экономика министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – кăçалхи кăрлач-аван уйăхĕсенче алкогольпе суту-илў тăвансенчен 60,1 пин литр суя эрех туртса илнĕ. Официаллă мар статистика вара кашни виççĕмĕш кĕленче суррогат пулнине палăртать.

ПАЯН кун тăршшĕ 7 сехет те 16 минут. Уйăх ўсет. Митрахван кунне пăхса çулла мĕнле çанталăк пуласса чухланă. Юр çунипе пĕрлех çил çурçĕр енчен вĕрни – çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнче сивĕ çумăр çăвасса. Çуна çулĕ йĕркеленнине паллă тунă. Хăна-вĕрле пухнă.

ЫРАН – çунашкапа ярăнтаракан Кĕтерне кунĕ. Пурте çуна сĕтĕрсе урама тухнă. Кĕтерне кунĕ уяр пулни – сивĕ хĕле.

ВИÇМИНЕ – çанталăка сивĕтекен Климент. Çак кун сивĕ пулнипе арçын та куççуль кăларнă. Хĕрарăмсем чўрече умне ларса çăм арланă. Автансем ир-ирех авăтма пуçлани вара – ăшăтасса. Ача çуралакан пўрт çывăхне кашкăрсем пухăнаççĕ тенĕ. Çавăнпа сăлтавсăр урама тухман, каç пулсан пушшех те.

ЫЙТУ – ХУРАВ

Çимелĕх те, хăналамалăх та

? Кашни çулах пан улми ахалех тăкăнса пĕтет. Ан тăкăнтăр тесен мĕн тумалла?

Инна МИХАЙЛОВА.

Çимĕç тĕввипе пулса çитменни тăкăнни – йĕркеллĕ пулăм. Йывăç хăйĕн вăйне перекетлессишĕн ытлашшине малтанах тăкать. Мĕн чухлĕ япăхрах пăхатăн – çавăн чухлĕ ытларах тăкать.

Пĕрремĕшĕнчен, çутăпа тивĕçтермелле. Хуралтă е ытти йывăç сулхăнĕнче вăл кирлĕ пек аталанаймасть. Улмуççине кун тăршшĕпех хĕвел кирлĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, лайăх апатлантармалла. Органикăпа минерал удобренийĕсене (азотлисене) çу уйăхĕнче тата çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче хывмалла. Çĕртме уйăхĕнче çимĕç тĕвви ытла нумай тăкăнасран улмуççи чечеке ларнă вăхăтра ăна комплекслă удобренипе апатлантармалла. Утă уйăхĕн пуçламăшĕнчен азот пама пăрахмалла, çурла уйăхĕн варринчен вара фосфорпа кали удобренийĕ хывма юрать.

Виççĕмĕшĕнчен, çителĕклĕ шăвармалла – çĕр ăшĕнчи тутлăхлă япаласене лайăхрах илĕ. Çапла вара çутă лайăх ўкекен вырăнта ўсекен улмуççине вăхăтра апатлантарса тăрсан, çителĕклĕ шăварсан пан улми çимелĕх те, хăналамалăх та пулĕ.

КИЛ КАРТИ

Тасалăха юратать

Кролик чыссăрлăха, нўрĕке юратмасть. Читлĕхсене типĕ вырăнта тытмалла, тасатса тăмалла.

Кроликсене ытларах ўсен-тăранпа апатлантарççĕ. Вĕсем ыраша, клеверпа люцернăна, пăрçапа ут кăшкарне, çулçăллă йывăç туратне юратса çиеççĕ. Куллен кăштах тăвар памалла.

Кролик çурисем пĕрремĕш эрнере амăшĕн сĕчĕпе çеç тăранса пурăнаççĕ, каярахпа амăшĕ çиекен апата килĕштереççĕ. Урпа, сĕлĕ, куккурус таврашне вĕтетсе памалла: çурасем чăмăр пĕрчĕсене лайăх чăмлаймаççĕ. Кролик çурисем тĕрлĕ хутăша тата сăсăл хушнă çĕр улми нимĕрне лайăх çиеççĕ. Çуркунне ешĕл апат çук чухне вĕсене шăтарнă сĕлĕ памалла.

◆ Сысна туяннă чухне çакна шута илĕр: унăн кўлепи мĕн чухлĕ вăрăмрах – çавăн чухлĕ чаплăрах. Вăрăм та ансăр пуçлă, вăрăм та çинçе шĕвĕр çурăмлă, типшĕм хырăмлă, çўллĕ кăнттам ураллă, хытанка пĕçĕллĕ, ансăр кăкăрлă, хытă та хулăн шăртлă сысна самăрланаймасть.

Аш валли самăртма юрăхлă выльăх кĕлетки хитре те тирпейлĕ: илемлĕ те çăмăл пуçлă, чипер шăмшаклă, пĕчĕккĕн пĕве куçакан кĕске мăйлă, çавăн пекех вăл тарăн кăкăрлă, сарлака, тикĕс те кĕске çурăмлă, вăрăм та сарлака купарчаллă, лайăх пĕçĕллĕ. Малти тата кайри урисем пĕр-пĕринчен аякра вырнаçни те аван.

◆ Кăрккасем час-часах вар хытнипе аптраççĕ. Кун пек чухне вĕсене ăшă сĕтпе скипидар хутăшĕ пулăшать: 1 стакан ăшă сĕте 1 чей кашăкĕ скипидар ярса хутăштармалла.

ПАХЧИ-ПАХЧИ

Кишĕрĕ ăнтăр

«Хресчен сасси» хаçатăн эрне кунхи кăларăмĕнче (89-мĕш номер, чўк,15) Вăрмар районĕнчи Вера Якимова кишĕр ăнманни пирки çырнăччĕ. Хаçатра пичетленнĕ хурава пăхмасăрах эпĕ те ăна хам енчен сĕнў парасшăн.

Кишĕре уйăх катăлма пуçласан акаççĕ, çавăн пекех зодиак паллисене пăхăнмалла. Тухăç лайăх пултăр тесен кишĕр вăррине уйăх тăхри вăкăр, пулă, скорпион паллисенче чухне акмалла. Ун пек май килмесен тараса, ухăç, арăслан паллисенче те юрать. Ытти паллăсенче аксан кишĕр ăнмасть.

Çитес 2014 çулта кишĕр акмалли чи лайăх кунсем – çу уйăхĕн 21-22-мĕшĕсем.

Кишĕре шăварма та пĕлмелле. Акнă хыççăн кишĕр йĕрĕсене лайăх шăвармалла. Тепĕр 10 кунран вара акнă йĕрĕ çине мар, икĕ йĕр хушшине шăвармалла, мĕншĕн тесен кишĕр калчи тухакан йĕрне сапсан çĕрĕ хытса ларĕ.

«Диетическая» тата «Самсон» сортсене çитĕнтерме сĕнетĕп.

Димитрий ЕГОРОВ.
Çĕрпў районĕ, Шалчакасси ялĕ.

Тăварлă шывра тытсан

Сад пахчинче усă куракан касмалли хатĕрсене – хачă (секатор), çĕçĕ, пăчкă – тăварлă шывра тытни вĕсен ĕмĕрне тăсать. 1 стакан шыв пуçне 1 кашăк тăвар илмелле. Инструментсене 30-40 градус таран ăшăтнă тăвар шывĕнче çур сехете яхăн тытмалла.

Тин туяннă инструмента малтанлăха кăшт çеç хăйрамалла, унтан тăвар шывне ярса лартмалла, кайран хайхи шыва чикечике кăларса тĕппипех якатса çитермелле. Çапла тусан черченрех хурçă та çирĕп пулать. Çивчĕшĕ те чылайлăха пырĕ.

ÇАНТАЛĂК	Шупашкарта	Вăхăт	6.12	7.12	8.12	9.12	10.12
	Температура, °С	2-4 сехетре	–11	–3	–6	–11	–14
		14-16 сехетре	–1	–1	–2	–6	–7
	Юр çăвать		⁂	⁂	⁂	⁂	–
Атмосфера пусăмĕ, мм.			733	737	741	745	748

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!

ХРЕСЧЕН САССИ

Хресчен сасси – 218 тенкĕ те 34 пус. Индексĕ – 54838

Хресчен сасси-Кил – 99 тенкĕ те 72 пус. Индексĕ – 43887

Çĕнĕ ял – çĕнĕ шай

Пĕрле туртсан лав çăмăлрах

Елчĕк районĕнчи Çĕнĕ Эйпеçре, Александр Бикулов фермер хуçалăхĕнче, çĕнĕ ферма хута кайрĕ.

– «Слава» хуçалăх юхăнсан район ертӳçисем пире хуçасăр юлнă уй-хире илме ыйтрĕç. Килĕшрĕмĕр, – каласа парать Лидия Бикулова. – Унтан ял çыннисенчен пай çĕрĕсене илтĕмĕр. Майĕпен усă куракан лаптăксем 1150 гектара çитрĕç. Паян унта тырă, выльăх апачĕ çитĕнтеретпĕр.

Бикуловсем фермер хуçалăхне 2007 çулта йĕркеленĕ.

– «Выльăх-чĕрлĕх те ĕрчетме тытăнмалла мар-ши? Тырă çав-çавах сутăнмасть», – сĕнчĕ мана мăшăрăм, – аса илет халĕ Лидия Владимировна. – 2009 çулта виçĕ миллион тенкĕлĕх ăратлă ĕне туянтăмăр та çанă тавăрсах ĕçе пикентĕмĕр.

Бикуловсем кредит илсе арканнă хуçалăхăн юхăнчăк фермине йĕркене кĕртнĕ. Çапах кивĕскерне çĕннипе танлаштараймăн. Выльăх хушăннă май вăл та тăвăрланнă. Укçа çителĕксĕррине пăхмасăр ĕçчен мăшăр çĕнĕ ферма тума йышăннă. «Çемье фермине аталантарсси» патшалăх программи хута кайни шанăç панă темелле. «Программăна кĕме пĕлтĕрех конкурса хутшăнса пăхрăмăр. Шел, гранта тивĕçеймерĕмĕр ун чухне. Кăçал каллех документсем хатĕрлесе тăратрăмăр», – сăмахлать Л. Бикулова. Хастар çемье çӳлтен пулăшасса кĕтсе ларман, банкран 11 млн тенкĕ кредит илсе строительство ĕçĕсене пуçаннă.

Пĕчĕк хуçалăха тăкака саплаштарса пыма çăмăл мар. Йывăр тапхăрта çемье фермине аталантарма грант – 5 млн тенкĕ – пама йышăнни пĕлĕтрен вĕçсе аннă телей кайăкĕ пекех туйаннă.

– Грант укçипе сĕте сивĕтме, упрама оборудовани туянтăмăр, канализаци турăмăр, – тет хастар хĕрарăм.

Хуçалăхра 308 ĕне выльăх, çав шутра сăвăнаканни – 96. Çĕнĕ вите 100 ĕне валли. Çулталăкра 520 тонна сĕт суса илмелле.

Проектăн пĕтĕмĕшле хакĕ 19,5 млн тенкĕ.

– Çĕнĕ ферма уçални республикăпа районшăн кăна мар, чи малтан ял çыннисемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, – палăртрĕ Елчĕк район администрацийĕн пуçлăхĕн ĕçне туса пыракан Леонард Левый. – Кунта ыттисем те ĕç тупса вырнаçма пултараççĕ.

– Выльăх-чĕрлĕхĕ хушăнса пырать. Сухаласа акакан лаптăксем те самай. Пур ĕçе çемьепе кăна ĕлкĕрсе пыраймăн. Юрать ял çыннисем пулăшса пыраççĕ, – теççĕ Бикуловсем.

Хуçалăхра паян 14 çын вăй хурать. Уйăхри шалăвĕ вунă пин тенке яхăн. Малашне, производство ӳснĕ май, ĕç вырăнĕсем татах пулĕç.

Халĕ сĕт килограмне 19 тенкĕпе ăсатаççĕ. Хăватлă оборудовани вырнаçтарнă май пахалăхĕ лайăхланĕ, тупăш та ӳсĕ.

Лидия Бикуловăн ĕмĕчĕ тулнишĕн кăмăлĕ çĕкленет. Çав хушăрах чунĕ хурланать: пĕлтерĕшлĕ ĕçе пуçарса яраканĕ мăшăрĕ Николай Пантелеймонович-çке, вăлах конкурсра çĕнтерсе грант илнĕ, строительство ĕçне хастар хутшăннă, шел, объект хута кайиччен кăштах пурăнса çитереймен. Кĕтмен йывăр чире пула арçын вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. «Эх, ферма ĕçлесе кайнине курнă пулсан мĕнле савăннă пулĕччĕши?» – пăшăрханать хĕрарăм.

Пĕр хывнă сукмака такăрлатмалла. Паян амăшне ачисем – Елена, Оксана, Александр – пулăшса пыраççĕ. Фермер хуçалăхĕн тилхепине ывăлне Александра шанса панă. Хулара пурăнаканскер йывăр вăхăтра яла куçса ĕçе тытăннă. Пĕрле туртсан лав та çăмăлрах шăвать çав.

Лариса НИКИТИНА.

Пĕчĕк бизнес валли

2013 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнчен Раççей ял хуçалăх банкĕнче пĕчĕк бизнес валли «Тест-драйв» акци хута кайнă. Çак тапхăрта банк клиенчĕсем тӳлевсĕр расчет счетне уçса виçĕ уйăх усă курма пултараççĕ. «Тест-драйв» – Раççей ял хуçалăх банкĕн çăмăллăхĕсене пĕлсех кайман клиентсем валли.

Раççей ял хуçалăх банкĕ пĕчĕк бизнеса пулăшассине аталантарсах пырать. 2013 çулхи 9 уйăхра пĕчĕк бизнес тытса пыракансене банк 77 млрд тенкĕлĕх кредит панă. Хальхи вăхăтра банкăн пĕчĕк бизнеспа кредит портфелĕ 146 млрд тенкĕпе танлашнă. Банк пулăшăвĕпе пĕчĕк бизнес тытса пыракан 39 пин çын усă курать.

«Тест-драйв» акци условийĕсемпе 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 31-мĕшĕччен усă курма май пур.

Парк та, музей те

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеçре кăçал ача-пăча паркĕ йĕркелеме пуçланă. Çулла ниме мелĕпе чуччу, турник тата сак ăсталанă. Кĕркунне ĕçе малалла тăснă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Василий Казанцев ертсе пынипе конькипе ярăнма лаптăк хатĕрлеме тытăннă. Çакă ачасемшĕн чăн-чăн парне.

Тепĕр ĕçпе те палăрса тăраççĕ Кивĕ Эйпеçсем: «Хресчен картишĕ» этнографи музейĕ хăтлама пуçланă вĕсем. Ăна та нимелле тăваççĕ. Чӳк уйăхĕн вĕçĕнче музей тăррине витнĕ. Ĕçе ял тăрăхĕн, культурăпа сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсен ĕçченĕсем те хастар хутшăннă.

«Хресчен картишĕ» валли экспонатсене килсерен пухĕç. Хăшĕ-пĕри пур та ĕнтĕ: суха пуç, ал арманĕ, тимĕр ака пуç, урапа, пир станокĕ. Музей таврашĕнче çăл та пулĕ. Çурт тăррине вара авалхи йăлапа çăка хуппипе витесшĕн.

Çĕнĕ варкăш

«Çĕнĕ çул уявĕ тĕлне пирĕн ачасене парнесемпе хавхалантарать. Шкул пĕтерекенсене те манмасть, савăнăçлă уява каллех парнесемпе çитет», – ыррине çинеçинех палăртма васкарĕ Зинаида Гаврилова пăру пăхакан.

«Кирлĕ маршăн вăрçмасть. Кирлишĕн ыйтать. Пач вăрçман хуçа хуçа-и вăл? Лайăх ертӳçĕ пирĕн», – каласăва хутшăнчĕ фермăрах ĕçлекен Людмила Борисова.

«Пулăшас килет тăвана. Упăшка ашшĕçке. Йăлтах йĕркеллĕ пултăр тетĕп», – пытармарĕ шухăшне ялти ферма заведующийĕ Ираида Тагеева.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски ялĕнчи Михаил Леонидович Тагеев фермерăн хăтлă та çутă сĕт-çу ферминче паян, чăн та, савăнса ĕçлемелле. Хăй вăхăтĕнче темиçе çул пушă ларнă ĕне витине тĕпрен юсаса çĕнетнĕ, вĕр-çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă. Ферма территорийĕнче 140 вырăнлăх пăру вити туса лартнă. Чи çамрăк пăрусем валли те уйрăм, çĕнĕ хуралтă пур.

Çулталăк çурă каялла пăрпа хутăш килнĕ çил-тăвăл района сахал мар шар кăтартнă. Фермер хуçалăхĕнче вăл вăхăталла çĕнĕ вите ăшчикĕнчи ĕçсене вĕçлесе тăррине хурçă тимĕрпе витсе çеç пĕтернĕччĕ. Хăрушла çил-тăвăл хыççăн вите тăррин пĕр пайĕ кăна тăрса юлнă. Каллех тăкакланма тивнĕ хуçа чунлă хресченĕн. Тӳнсе кайнă шыв башни вырăнне çĕннине лартнă. Алă усман çирĕп шăнăрлă ĕçчен, кăмăлне хытарнă та малаллах талпăннă: сапламаллине саплана, улăштарнă, çĕнетнĕ. Кунта халĕ кашни япала хăйĕн вырăнĕнче. Ферма коллективĕ те йĕркеленсе çитнĕ. Ăна ертсе пыракан асăннă тăрăх – вăл шанчăклă. Кун пекки вара ертӳçĕне тивĕçлипе хаклать темелле.

Чылай хушă сас-чӳ паман фермăна «сывлаттарма» фермера, паллах, патшалăх çăмăллăхĕ пулăшнă. Михаил Тагеев çемье фермисене аталантарассипе йышăннă федераци программине кĕме пултарнă, грант çĕнсе илнĕ. Унăн укçипе тĕллевлĕ усă курса çĕнĕ хуралтăсем çĕкленисĕр пуçне Мари Эл республикинчен 100 пуç ытла ăратлă тына илсе килнĕ. Пĕрремĕш çул хăйсем тĕллĕн пăрулаймасăр мĕн чухлĕ тертлентермен вĕсем ферма ĕçченĕсене?! Пăрушĕсене турта-турта кăларма та тивнĕ. Кайран ĕнисене пайтах сиплеме лекнĕ. Кадрсем çитмен, уйрăмах ветеринар кирлĕ пулнă. Малтанах ĕçе илнĕ дояркăсем те шанăça тӳрре кăларман. Паянхи ферма заведующийĕн ун чухне хăйĕн ĕнесене сума тивнĕ.

Халĕ апла мар. Çĕр пуç ытла ĕнене (фермер хуçалăхĕнче мăйракаллă шултра выльăх пĕтĕмпе 300 пуç ытла) сăвакан тăватă доярка икшер кунтан улшăнса ĕçлет. Пытармасăр каласан, фермера вĕсем хакла та лараççĕ. Шалăвне вăхăтра тата ял çыннишĕн сахалах мар тӳлет пулин те тăван ялĕнче те, çывăхрисенче те вăл дояркăсем тупайман. Халăх ферма ĕçĕнчен писет мар-и? Инçетре шырама тивнĕ. Юрать-ха тăваттăшĕ те пĕр ялтан. Чи пахи – яваплăха туйса ĕçлекенсем. Ирĕн-каçăн вĕсене чаплă çăмăл автомашинăпа илсе килеççĕ, ăсатса яраççĕ. Хальччен Ираида Тагеева ферма заведующийĕ хăйĕн машинипе турттарнă. Халĕ сыхланарах парать: иккĕмĕш хут ача амăшĕ пулма хатĕрленет. «Кăрлач вĕçĕччен ĕçлĕп-ха. Хама улăштаракана тупмалла, вĕрентмелле. Шанчăклă алăра хăварас килет фермăна», – тет хĕрарăм.

Тепĕр ыйту та канăç памасть çак пăрчăкан пек вăр-вар,типтерлĕ ĕçчене. Ара, юлашки вăхăтра практикăра пулнă ветеринар ял хуçалăх академине таврăнсан ферма каллех зооветспециалистсăр юлать-çке. Паянхи Юлия Федорова студенткăна та вăхăтлăха аран тупнă. Кунтах дояркăра ĕçлекен амăшĕ урлă çеç. Хĕр пултаруллă та пуçаруллă. Фермăри выльăха кăна мар, ăнсăртран витери пĕр пӳлĕме лекнĕ кушака та пыйтă ересрен тĕрĕслесех тăнине кăмăллăн палăртать ферма ертӳçи.

Пӳлĕм тенĕрен, пурте хăтлă вĕсем кунта. Акă Ирина Тагеевăн ĕç вырăнĕнчи чечексем çеçкере. Чӳрече (витери пĕтĕм чӳрече пластикран) карри килти пек таса, шапшурă. Фермăри тата унăн таврашĕнчи ларутăрава специалист компьютерпа сăнаса тăрать. Сĕт сивĕтмĕшĕсемпе те пĕлсе ĕçлет, кунта та çĕнĕ йышши техникăна алла илни кирлĕ.

Çанталăк сивĕтме пуçланăран витери çăвăнмалли пӳлĕм алăкĕ кашни кунах уçăлса хупăнмасть. Çулла дояркăсем те, ытти ĕçченсем те кунтан тухма пĕлмен темелле.

Халăха ĕçлеме майсем туса пама тăрăшать фермер, ыйтнине тивĕçтерсех тăрать. Сăмахран, витерен тислĕк кăларма лли хатĕр пĕр хушă чăхăмланăран Александр Кривов слесаре тимĕре шăратса çыпăçтаракан агрегат туянса панă.

Ĕçлекен малашне те тăрăштăр тесе çамрăксене республика пуçлăхĕн стипендине илме тăратасси те йăлара. Артемий Каяхов механизатор (вăл фермăра ĕçлет) кăçал иккĕмĕш хут стипендиатсен йышне лекнĕ.

Çĕнĕ йышши машина-трактор (фермер хуçалăхĕнче те пур кунашкаллисем) çине кăна мар, паянхи пурнăç ыйтнипе тунă фермăсенче те пĕлӳ пухнă специалистсем кирлĕ. Ĕне сăваканăн, пăру пăхаканăн е тислĕк кăлараканăн çĕнĕлле ĕçлеме пĕлмелле. Михаил Тагеев пек фермерсем ытларах пулсан «ферма ĕçĕ – хура ĕç» тени аваллăхра юлĕ.

Ирина НИКИТИНА.

Çĕнĕ ял – çĕнĕ шай

Малалла-ха пурнăç, малалла...

КАШНИ ЯЛ ХĂЙЁН САВĂНĂÇЁПЕ, ХУЙХИ-СУЙХИПЕ ПУРĂНАТЬ. ТĂВАЙ РАЙОНЁНЧИ ТĂРМĂШ ТА САМАНА ТАППИПЕ УТАТЬ. АСĂННĂ ЯЛ ТĂРĂХНЕ ИКĔ ЯЛ КЁРЕТ. ВЁСЕНЧЕ 700-Е ЯХĂН ÇЫН ПУРĂНАТЬ.

Ёçчен валли ёç тупăнать

«Аталанатпăр-ха, – пуçларĕ хăйён сăмахне ял тăрăхён пуçлăхĕ Владимир Разин. – Вырăнта Ленин ячёллё ял хуçалăх пур. Унсăр пуçне çынсем Канаша, Тăвайне ёçлеме çÿреççё. Пирён ял çул çинче ларнăран халăх ёмёрех ют çёрте вăй хунă. Астăватăп-ха, ирсерен автобуса васкатчё ялйыш, тёрлё предпрятире тăрăшатчё. Халё чылайăшё хупăнчё, çамрăксем ёçсёр юлчёç. Çавăнпа та нумайăшё Мускавра, Питёрте вăй хурать».

Ют çёрте тăрăшакансем ялта икё хутлă керменсем лартаççё. Вёсенче пур услови те пур: душ, туалет, шыв кёрет-тухать. Бассейн тăвакан та тупăнать. Мускав пурнăçне чăваш ялне куçараççё çамрăксем. «Шел те, укçана пурте çемйи çине ямасть, – малалла тăсăлать сăмах çăмхи. – Урçасем ытларах сăра-эрех енне туртăнаççё. Тепёр чухне уншăн вăрçса та илетёп вёсене».

Ялта паян пётём ёçе укçалла пурнăçламалла. Камăн техника пур – вăл ёне выльăх та тытать. Ватă çын вара çёр пайне ял тăрăхне каялла парать. Ёне усрасшăн вăл, анчах вăй-халё чакать.

Лаша вырăнне ял-йыш мотоблок туянать. Çăмăллăх кредичёпе пысăк трактор илекен те пур. Çăмăл машина кашни кил умёнчех ларать.

Выльăх усрама хирёç мар халăх. Аш хакё çуркунне самаях пысăк пулнă. Халё вара чакнă. Тупăш илме май çук тăк выльăх туянса самăртас ёçе те пăрахăçлать вăл. Сёт хакё йÿнелнёренех мăйракаллă шултра выльăх шучё чакма пуçларё.

«Ёçчен çын валли ялта та ёç пур, – тет пуçлăх. – Ачисене вёрентмелле чухне чылайăшё выльăх-чёрлёх тытать. Çак тёллевпе хамăр та пёр вăхăт картиш тулли усрарăмăр. Икшер вăкăр, темиçе сысна хёл каçараттăмăр. Гектаршар çёр улми çитёнтереттёмёр».

Шухăшпа шур пÿрт лартаймăн

Ялта пурăнма кăмăл тăвакан çамрăксем те пур. Шел те, ун пекки сахал. Çамрăк çемьесем район центрёнче е хулара хваттер туянасшăн. Ялта çурт-йёр тăвас шутлисем çукрах. Кăçал виçё çамрăк çемье кил-çурт çавăрма укçа-тенке тивёçет. Вёсенчен иккёшё Тăвайёнче тата Канашра хваттер илё. Ольгăпа Алексей Капитоновсем вара ялта çурт хăпартаççё. «Кил-çуртлă пулччăр тесе черете тăрататпăр çамрăксене. Каярахпа укçа парса хамăрах ялтан кăларса яратпăр. Çакăншăн чун ыратать. Района юлсан юрать-ха. Вёсем хуланалла туртăнаççё-çке. Укçа вара район бюджетёнчен каять. Эпир те ял тăрăхён бюджетёнчен паратпăр», – пăшăрханать Владимир Валерианович.

«Ёç çукран хуланалла талпăнать пулё çамрăк», – малалла сыпăнтаратăп калаçăва. «Халё никам та тракторпа ёçлесшён мар, ёне те сăвасшăн мар. Çамрăка урăхла ёç кирлё. Доярка шыраса халтан каятăн, механизаторсем те çитмеççё. Çёнё трактор пирки ёмётленеççё вёсем, киввипе ёçлесшён мар. Хуçалăхăн ăна туянма укçа çук. Сакăр вуннăмёш çулсенче кашни икё çултан пёрер трактор-машина килсе тăратчё. Киввисене «пенсие» ярса çённисемпе ёçлеме тытăнатчёç. Халё хуçалăхсем «ирёклё ишевре»: укçа пулсан – трактор туянатăн, çук тăк – киввине упратăн. Çёр ёçёнчен те ютшăнса пырать çамрăк. Çынна çёр тăрантарнине вёсен мăнукёсем ăнкарса илсен юрёччё хăть» , – пулчё хурав.

Çапах та ял хуçалăхё аталанасса шанать Владимир Разин. Ку енёпе фермер ёçне йёркелес текенсем шанăç параççё. Колхоз витисене туяннă вёсем. Унта малашне шултра мăйракаллă выльăх ёрчетесшён. Хальлёхе ку шухăшра çеç. Мёншён тесен тăрăсăр, алăксăр-чÿречесёр хуралтăсене йёркене кёртме çăмăл мар. Шухăшпа кăна шур пÿрт лартаймăн çав.

Аркатма – çур талăк, тума – çулталăк

Ялти информаципе культура центрё тăхăр çул хупă ларнă. Икё хутлă çуртра спортзал, библиотека вырнаçнă. Ăна юсама патшалăх укçа-тенкё уйăрман. Икё çул каялла Тăрмăшсем ялсенче комплекслă майпа çурт-йёр тăвас тата тирпей-илем кёртес енёпе конкурса хутшăнса çёнтернё. Уйăрнă укçа-тенкёпе клуба юсанă. Иртнё çул вара информаципе культура центрё ятарлă конкурсра мала тухса сцена кёпе-тумтирё, тёрлё хатёр-хётёр, компьютерпа видеопроектор тивёçнё. «Халё клуба кёрсе тухма та кăмăллă», – терё пуçлăх. Халăх та çÿрет. «Тăрмăш» фольклор ушкăнё кăçал «халăх» ятне илнё. Унсăр пуçне «Ал ăстисем», «Тёпел» кружоксем ёçлеççё.

Спортзала та йёркене кёртнё. Урайне улăштарнă, сăрланă. Ял çамрăкёсем савăнсах çÿреççё унта, волейболла, футболла выляççё вёсем. Ахальтен мар Тăрмăшсем ку енёпе республикăра та палăрма ёлкёрнё. Иртнё çул ялта хоккей площадки уçнă. Хёлле вăл пушă тăмасть, ватти-вётти чупать унта.

Иртнё ёмёрён 70-мёш çулёсенче ялта ача сачё йёркеленё. 80 вырăнлă вăл. «1995-96 çулсенче ăна хупма шухăшларёç. Мёншён тесен ачасем çуралмаççё, çурта хутса ăшăтма кăмрăк та, ăна тытса тăма бюджетра нухрат та çукчё. Çапах садике сыхласа хăвартăмăр. Таврари ялсенче чылайăшне хупрёç, хăшне-пёрне пăсрёç. Вёсен алăкёсем паян та уçăлаймаççё», – аса илет иртнине Владимир Валерианович.

Тăватă ушкăн йёркеленё кунта. Ача садне çÿрес текенсем черетре те тăраççё. Йывăрлăха чăтса ирттерни, садике упраса хăварни халё çав тери паха. Мёншён тесен вăл кирлех. Çитменнине ача шучё те ÿсет.

Пулăшу ютран килмест

Свердловск облаçёнчи Василий Мельниченко фермер ял çыннине влаça хăй аллине илме сёнет. Ку тёлёшпе вăл «Çёнё ял – çёнё шай» проект та хатёрленё. Ăна чи малтан хăйён тăван ялёнче – Галкинăра – пурнăçа кёртесшён. Хатёр проектпа ытти тăрăхра та пулнă вăл. Сăмахран, кёркунне Пушкăрт Республикине, Омск тата Курган облаçёсене çитсе курнă.

Асăннă проектăн тёп тёллевё – ял çынни хăй пурăнакан территорире хуçа пулмалла. Пулăшу ютран килмессине ăнланса вырăнти хăй тытăмлăх органё урлă тăван тăрăха епле аталантарассине пăхса тухмалла, бизнес-план хатёрлемелле, инвесторсене явăçтармалла. Унччен маларах инвентаризаци ирттермелле. Унта ёç вăйёнчен пуçласа пурлăх (ял хуçалăхё, вăрман, çёр айёнчи пуянлăх, промышленноç тата ыт. те) таранах кёртмелле.

Çак проект Раççейри мён пур тăрăхра пурнăçлансан çёр-шыв чечекленёччё. Шел те, унччен пайтах вăхăт иртё. Çул тумхахлă пулсан та малаллах утмаллине палăртать фермер.

Василий Мельниченко кăçал Мускавра иртнё экономика форумёнче те тухса каласнă.

Проектпа килёшÿллён çёнё пурнăça хăть хăш регионти ялта тума пулать. Мельниченко пёлтернё тăрăх – темиçе субъект (пуçлăхсен килёшёвёпе) эксперимента хутшăнма хатёр те.

Раççейри ялсенче вырăнти хăй тытăмлăх çуккине лайăх ăнланать фермер. Мёншён тесен унта производство та, налук никёсё те çук.

– Вырăнти хăй тытăмлăх укçасăр йёркеленеймест. Енчен те çак территори нухрат ёçлесе илме пултараймасан, кама шалу парассине, ял мёнле аталанассине халăх татса памасан, ял тăрăхён пуçлăхё хăй тёллён нимён те тăваймасть. Ял çынни çине тăмасан ёç-пуç малалла каймё, – тет вăл.

В.Мельниченко Курган облаçёнче семинар ирттернё. Фермера итлеме депутатсем, общество организацийёсен представителёсем тата ял хастарёсем пынă. Кунта, ытти регионпа танлаштарсан, экономика аталанăвён шайё пёчёкрех. Çавăнпа пурте центра шанаççё: Мускав укçа парсан – пурăнатпăр. Халăх шухăшё пёлтерёшлё мар. Хăйён ирёкне хÿтёлесси, пуçарулăх пирки ял халăхё çăвар уçма та хăрать.

– Правительствăн ял халăхне пулăшма вăхăт çук, унăн Олимпиадăна хатёрленмелле, – палăртать Мельниченко. – Çавăнпа та халăхăн пёр шухăшлă пулса ёçлемелле, ял тăрăхён экономикине аталантармалла. Ырă кăмăллă президента, патшана, ертÿçе чылай кётме тивет. Çав вăхăтрах ёç-пуçа унсăрах йёркелеме май пур.

Курганти «Тёрёс суйлавшăн» общество организацийён ертÿçи Габдулла Исакаев фермер ёçё-хёлне хакласа çапла каланă: «Мельниченкăна эпё пилёк çула яхăн пёлетёп. Эпё унпа оппозици форумёсенче тёл пулнă. Вăл яланах ял темине хускатать. Хресчене ыйхăран вăратасшăн. Хулара е ялта пурăнакан чылай çын пурнăça кам та пулин килсе лайăхлатасса кётет. Мана Мельниченко тёллевё килёшет: критиклетён пулсан – сёнÿ пар. Сёнсен – пурнăçла. Çакнашкал тёл пулу çинчен ялсемпе поселоксенчи кашни çын пёлтёр».

Курган облаçёнчи Куртамыш районёнчи Юрий Кокарев:

– Эпё фермерта ёçленё çын. Хальхи налук политики мана панкрута кăларма «пулăшрё». Эпё пёччен мар, ман пек шăпаллисем татах пур. Мускава çырнă çăхавсем вырăнах таврăнаççё. Кунта вара пысăк укçа кирлё. Хальлёхе ывăлăма фермер ёçёнче пулăшатăп. Анчах унăн та алли усăнать. Ялсенче Василий Мельниченко пек хастар çынсем кирлё. Шел те, ун пекисем çемйине тăрантарас тёллевпе ют çёре ёçлеме тухса каяççё. Ялта вара айвансем юлаççё.

Курган облаçёнчи Долматово районёнчи Маргарита Шатило:

– Ял шăпине çамрăксем çеç татса пама пултараççё, ват çынра малашлăх çук. Çитёнекен ăру хăй вăйне çеç шанать. Хальхи вăхăтра вёсене никам та хваттерпе тивёçтермё, укçаллă ёç вырăнё те сёнмё. Пурнăça пётёмпех хăйсен йёркелемеллине пёлеççё вёсем. Пачах урăхла çитёнеççё, хăйсемшён кёрешме пёлеççё. Эпё вёсене шанатăп.

Валентина ПЕТРОВА.

Кăларăм Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе тухса тăрать.

ÇЫРĂНТАРУ – 2014

ХЫПАР

Хаçат тăрăх ырра вёренесчё – «Хыпара» паянах çырăнса ёлкёресчё!

Хыпар – 460 тенкё те 86 пус Индексё – 54800

Хыпар-шăмат кун – 213 тенкё те 30 пус Индексё – 78353

Сăмах – çерçи мар

Каланă...

Дмитрий МЕДВЕДЕВ, РФ правительствин председателĕ, Раççейри сĕт-çу производствине аталантарасси çинчен:

«Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсемпе эпир хамăра хамăр тăрантарма пултаратпăр. Сĕт-çу туса илессипе тĕнчере чи малти пулмашкăн пирĕн пĕтĕм шанăç пур».

Алексей КРАСИЛЬНИКОВ, Раççей çĕр улми пĕрлĕхĕн директорĕ, хаçатра пĕлтернинчен:

«Çĕр улми хакĕ хăпарса кайрĕ, тинех чакмасть ĕнтĕ. Çĕр улми сутас текенсем те нумаях пулмĕç».

Иван УШАЧЕВ, академик, Раççей ял хуçалăх академийĕн вице-президенчĕ, ял хуçалăх экономикин институчĕн директорĕ, Раççей правительстви çумĕнчи агропромышленноçпа пулă хуçалăхĕн эксперт канашĕн ларăвĕнче каланинчен:

«Калининградран пуçласа Владивосток таран – 38 миллиона яхăн çын пурăнакан ялсем валли – 2013 çулта Мускавран Сколково çулне тумалăх çеç укçа уйăрнă».

...пурнăçланă

Ку таранччен эпир хамăр пултарулăха çав тери ăста пытарса пурăннă-ши вара? Сăвакан ĕнесене тытса тăма федераци бюджетĕнчен 100 млрд тенке яхăн укçа пĕтернĕ те ĕнтĕ. Анчах Раççейре сĕт суса илесси те, выльăх йышĕ те чакса пырать. Хамăра кирлĕ сырпа услам çăвăн çуррине эпир ют çĕр-шывсенчен турттаратпăр. Статистика тăрăх – Раççейре çулталăкне 30 млн тонна ытларах сĕт суса илеççĕ. Анчах сĕт тирпейлекен предприятисем витĕр 15 млн тонна çеç тухать. Патшалăх çыннисем ытти сĕте мĕнле шутлани паллă мар.

Кăçал çĕр улми 23,2 процент хакланчĕ. Çĕр улми пуррисемшĕн ку питĕ лайăх. Çуккисен вара тўлеме тивет. Вăл шутра патшалăхăн айванла аграри политикишĕн те. Иккĕмĕш çăкăр пире тăвар пекех питĕ кирлĕ-çке, анчах çак çимĕçе куллен туянма тивекенсемшĕн ăна кăшт та пулин чакарма патшалăх нимĕн те тăваймасть.

Иван Григорьевич çав тери асăрханса калаçакан эксперт. Вăл та влаça çапла критиклет пулсан – ĕç-пуç чăнласах та питĕ начар.



Тĕксĕр автанпа чăх

Израиль ученăйĕсем автанпа чăхăн çĕнĕ тĕсне – тĕксĕррисене, çарисене – шухăшласа кăларнă.

– Пирĕн çĕр-шывра питĕ шăрăх çанталăк. Калама çук вĕри пулнипе пĕлтĕр пин-пин кайăк-кĕшĕк вилчĕ. Чăх-чĕпсĕр тăрса юлас мар тесен хăватлă кондиционерсем лартма тивет. Вĕсем вара питĕ хаклă, – тет Коханер профессор.

Чăхăн ўт температури 42 градус ăшă. Урамра та çавнашкалах вĕри. Тĕке пула ўт пач та сивĕнеймест. Çавăнпа Израиль ученăйĕсем çара чăх ăратне кăларнă. Вĕсен тĕкĕ пачах та çук. Чăхсене «çарамаслантарма» чылай çул ĕçлеме тивнĕ. Мăнтăр бройлерсене сайра тĕклĕ чăхсемпе пĕтĕçтере-пĕтĕçтере çарамассисем патне çитнĕ. Халĕ çара автанпа чăхсем ахальлисенчен самай тухăçлăрах теме те юрать, çапах вĕсене илемлĕ теме ниепле те чĕлхе çаврăнмасть.

КУЛĂШ, ПУЛĂШ!



Пўрнинчен иртеймĕн

ÇĔР-ШЫВСЕН ЕРТЎÇИСЕМ: КАМĂН МĔНЛЕ ЧИР

ГИТЛЕР

Америкăри медицина журналĕнче Гитлер чирĕ пирки тĕпчев ĕçĕ пичетленсе тухнă. Документлă фильмсемпе сăн ўкерчĕксем тăрăх – Гитлерăн Паркинсон чирĕ аталанма пуçланине палăртнă. 1930 çулсенчи сăн ўкерчĕксенче вăл сылтăм аллипе сулахаййине тытса тăни курăнать, ахăртнех, чĕтреннине пытарасшăн пулнă. Кинохроникăран та Гитлер утти улшăнса пыни паллă. Юлашки çулсенче вăл ўпĕнерех те вĕттĕн-вĕттĕн утнă. Çак чир ăна тĕппипех çапса ўкериччен, ăсран тайăличчен пурăнса ĕлкĕреймен Гитлер.

СТАЛИН

Иосиф Сталин хăйне кам та пулин кураймасăр вĕлересрен хăраса пурăннă. Параноид диагнозне паллă невролог Бехтерев лартнă. Академика ун патне пач урăх сăлтавпа, пуçлăхăн алли мĕншĕн типме тытăннине пĕлме, чĕнтернĕ. Бехтерев вара, психиатр та пулнăскер, унăн сывлăхĕ тата япăхраххине туйса илнĕ. Мĕнлерех чир аталанма пуçланине пĕлтернĕ. Пĕлтернĕ те хăйĕн пуçне çинĕ. Пĕррехинче, ир кўлĕм, чейпе сăйлансан академик çамрăк çынсен ушкăнĕнче сасартăк вилсе кайнă. Параноик вара çĕр-шыва тата чĕрĕк ĕмĕре яхăн ертсе пынă. Çывăх тăванĕсен хушшинче те тăшманĕсене курнă вăл. Хăйне тапăнасран хăраса дачине кайнă чухне темиçе автомобиль улăштарнă.

РУЗВЕЛЬТ

Пысăк должноçри çынсене сиплесе пурăннă Франци академи наукисен профессорĕ Жан Бернар çапла çырнă: «Час-часах шухăша каяттăм. Ялтăри тĕл пулура Сталин Рузвельт чирĕпе мĕнлерех усă курнăши? Америка президенчĕ Франклин Рузвельт полиомиелитпа аптранисĕр пуçне, президентра тăваттăмĕш срок ларнă тапхăрта, инфаркт та тўссе ирттернĕ-çке. Чирлĕ президента çакăн пек асаплă çул çўреве кăларни Сталин каварлăхĕпе, ют çĕр-шыва парăнтарас тенипе çыхăннă-тăр».

ЧЕРЧИЛЛЬ ТАТА КЕННЕДИ

Сăмах май, Ялтăри конференцие хутшăннă Уинстон Черччилль те ун чухне хăйне лайăхах туйман – депрессире пулнă. Великобритани премьер-министрĕ кăмăл пусăрăннă кунсене «хура йытăсем» тенĕ.

Америка президенчĕ Джон Кеннеди те хăйне хăй нушаланнă. Ахăртнех, çакă унăн пўре çи парĕ йĕркеллĕ ĕçлеменнипе çыхăннă. Çак чирпе аптракансен ўчĕ хĕвел çинче хĕрелсе хуралнăн тĕксĕм курăнать. Вĕсем питĕ хăвăрт чĕрре кĕреççĕ, ыйхи çĕтет. Унсăр пуçне Джон Кеннеди иккĕмĕш тĕнче вăрçинче çурăм шăммине амантнă. Çаксем тата Шурă çуртри канăççăр пурнăç унăн нерв тытăмне йăлтах хавшатса çитернĕ. Ку шăпах президента пăшалтан пенĕ вăхăтпа тўр килнĕ. Кун пирки тухтăрсем те лайăх пĕлнĕ, президент срокĕ вĕçленичен чăтаймасран та шикленнĕ.

Совет Союзĕпе Америка тĕл пулăвне йĕркеленĕ чух тухтăрсем Кеннедие малтанах асăрхаттарса хунă: Хрущев приступ вăхăтĕнче питĕ хăрушă, хăвăрт тулхăрса каять, анчах хăйне кирлине илессишĕн калаçава юри вăраха тăсма пултарать. Çав тери чăтăмлă çын. Хрущевпа сехет çурăран ытла калаçмалла мар.

Çакна асра тытса Кеннеди хĕрў самантсенче тăхтав тунă е тĕл пулу вăхăтне кĕскеттернĕ.

Шăпах çавăн чухне ĕнтĕ Кеннеди пуçарнипе «медицина разведки» йĕркелесе янă, тĕрлĕ патшалăх ертўçисен сывлăхĕ пирки информаци пухма тытăннă.

РЕЙГАН

Рональд Рейган Америкăн 40-мĕш президенчĕ пулса тăнă чухне 70 çула кăшт çеç çитеймен. Америка историйĕнче чи ватă президент шутланнă вăл. Калифорни штачĕн кĕпĕрнаттăрĕн пуканĕ çинче ларнă чухнех Рейган час-часах мĕн çинчен калаçнине маннă пирки ун çинчен анекдотсем çўренĕ. 1980 çулта Рейган президент пулма хатĕрленни çинчен пĕлтерсен телеинтервью вăхăтĕнче унран чи çывăх тăванĕсен хушшинче пулни-иртнине манакан пуррипе çуккине ыйтнă. Вăл 80 çула çитсе вилнĕ амăшĕ склерозпа аптранине пĕлтернĕ. Хăйне те çак чир çулăхсан тўрех отставкăна каясса системнĕ. Анчах инкекĕ çитсе çапсан çакна асăрхамăш пулнă. Рейганăн майĕпен Альцгеймер чирĕ аталаннă. 1984 çулта суйлав кампанийĕн вăхăтĕнче вăл теледебатра шухăш тĕшшине çухатнипе темиçе пысăк йăнăш тунă. Хăйĕн политика йышăнăвĕсене те вăл манса кайкаланă, тепĕр чух вĕсен пĕлтерĕшне те ăнланман.

Рейган пĕрремĕш хут президент пулнă чухне Францире те суйлав кампанийĕ пынă. Президент кандидачĕсенчен пĕри – Франсуа Миттеран – кашни çур çулта халăха хăйĕн сывлăхĕ пирки пĕлтерсе тăма шантарнă. Президент пулса тăрсан темиçе уйăхранах вăл хăйĕн рак пулнине, виçĕ çултан ытла пурăнаймасса пĕлнĕ. Сăмах панине пăхмасăрах хăрушă диагнозĕ пирки никама та пĕлтерме хушман.

МИТТЕРАН

Миттеран умĕнхи Жорж Помпиду президент хăйне асаплантарнă юн чирĕ çинчен никама та каламаннине, анчах Никсон чăнлăха тупассишĕн хăйне евĕр меслет тупнине Франсуа пĕлнĕ. Рейкьявикра иртнĕ тĕл пулура Америка агенчĕсем Помпиду резиденцине кĕрсе унăн шăкне илсе тухма пултарнă. Мĕнле майпа? Паян кун та паллă мар. Анализ кăтартăвĕсемпе паллашсан Никсон çывăх сотрудникĕсене çапла пĕлтернĕ: «Вăл нумаях пурăнаймĕ».

Помпиду анализĕн пăтăрмахне Франсуа Миттеран пĕлнĕ, çавăнпах хăйĕн чирĕ çинчен никама та сăмах хушман. Ятарлă службăсем санузел урлă тем те пĕлме пултарасса чухласа унта нимĕн те тупма май ан килтĕр тесе тăрăшнă. Сăмах май, врачсен хăрушă диагнозĕ хыççăн Миттеран виçĕ çул мар, вун пилĕк çул пурăннă.

МАО ЦЭЗДУН

Çакна каласа хăвармалла: ют çĕр-шыв ертўçисем пирки медицина информацийĕ пухма совет специалисчĕсем пуçаннă. 1949 çулта вĕсем Мао Цзэдун шăк-пăхне илессишĕн хăйсенчен мĕн килнипе килменнине пĕтĕмпех тунă. Китай ертўçи Совет Союзне килсен ăна Сталин ятарласа чылай вăхăт хушши йышăнман, «туалет информацийĕ» ытларах пултăр тесе тăрăшнă. Çак тĕллевпех ятарлă унитаз, каяша тўрех урăх çĕре куçараканни, ларттарнă теççĕ.

ЕЛЬЦИН

Раççейĕн пĕрремĕш президенчĕ Борис Ельцин мĕнле чирленине эпир ас тăватпăр. Унăн инфарктпа йывăрланнă чĕре артерийĕн шыççи пулнă. Пуç миминчи юн çаврăнăшĕн ĕçĕ пăсăлнипе çамрăк чухнех пуплев органĕсем сиенленнĕ, çавна май вăл майĕпен каласнă. Унсăр пуçне Ельцин тăн çухатнипе, сывлăшĕ пўлĕннипе аптранă. Президент сывлăхĕпе кăсăкланса тăнă ют çĕр-шыв эксперчĕсем унăн диабет паллисене асăрханипе пĕрлех эрех ĕçме юратнипе цирроза куçма пуçланă гепатит палăрăмĕсене те асăрханă.

Раççей хаçат-журналĕ тăрăх Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Нумай ачаллă çемьесене – çĕр

Муркашри Грачевсем виçĕ ывăл çитĕнтереççĕ. Вĕсем салари икĕ пўлĕмлĕ хваттерте пурăнаççĕ. Кăçал çемьере пĕчĕк пепке хушăннă май хваттерте палăрмаллах тăвăрланнă. «Ялта уйрăм çурт-йĕрте пурăннине нимĕн çитмĕ», – ĕмĕтленнĕ Грачевсем. Вĕсен ĕмĕчĕ кĕçех пурнăçа кĕрĕ: Муркаш район администрацийĕ нумай ачаллă çемьене Катикасси ял тăрăхĕнче çурт лартма çĕр уйăрса пама йышăннă.

– Çемье пысăкланнă май унччене уйрăм çурт лартма шутланăччĕ. Пире çĕр лаптăкне Катикасси ял тăрăхĕнче, Атăлпа юнашар, илемлĕ вырăнта панине пĕлсен савăнтăмăр. Шупашкар та çывăхрах. Çитес çул, çу кунĕсенче, çурт лартма тытăнасшăн, – пĕлтерет Надежда Юрьевна.

Сăмах май, Муркаш район администрацийĕ Катикасси ял тăрăхĕн территорийĕнче нумай ачаллă çемьесем валли уйрăм çурт лартма 111 çĕр лаптăкне йĕркелет. Пурĕ 23 гектар йышăнмалла вăл.

Шупашкар хулипе Муркаш район администрацийĕ Катикасси ял тăрăхĕнчи 118 гектар çинче нумай ачаллă çемьесем валли пĕчĕк хутлă çуртсем лартма проект хатĕрлеççĕ. Çывăх вăхăтра унта поселок ўссе ларĕ. Пурăнмалли çуртсемпе пĕрлех социаллă объектсем тума та палăртнă: лавкка, автостанци, фельдшерпа акушер пункчĕ тата ытти те.

Кăçалхи чўк уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне республикăра çĕр лаптăкĕ пама нумай ачаллă 3776 çемьене шута илнĕ. Вĕсем ытларах Шупашкарта (1343), Шупашкар районĕнче (423), Çĕнĕ Шупашкарта (378) пурăнаççĕ. Çак тапхăрта 1613 çемье çĕр сертификатне тивĕçнĕ, çав шутран çурт-йĕр çавăрма –915, хушма хуçалăх аталантарма – 653, дача валли – 45. Вĕсене 196 гектар çĕр уйăрса панă.

Илем илĕртет

Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ тăрăхĕнче темиçе çул каяллах пулнăччĕ. Унтанпа чылай улшăну пулса иртнĕ. Тинех культура вучахĕ тĕпрен çĕнелнĕ. Çутă сăрăллă икĕ хутлă çурт аякранах курăнса ларать. Кунта тĕрлĕ кантурпа пĕрлех библиотекпа культура центрĕ вырнаçнă. Çурт умĕнчи чалашнă картана та йĕркене кĕртнĕ. Алăк çинче – ял тăрăхĕн гербĕ.

– Темиçе çул каяллах тунă культура çурчĕ юхăнса çитнĕччĕ. Çиелтен юсакаланă-ха, анчах тĕпрен çĕнетме укçа çитсе пымарĕ. Çавăнпа «Ял тăрăхĕсенче комплекслă майпа çурт-йĕр тăвасси тата тирпей-илем кўресси çинчен» программăна хутшăнтăмăр. Телее, пире пулăшма йышăнчĕç. Республика тата район бюджечĕсенчен 1325 пин тенкĕ уйăрса пачĕç. Иртнĕ çул Кĕçĕн Шетмĕри, Пшонкăри кану çурчĕсене, библиотекăсене юсаса çĕнетрĕмĕр, – каласа парать кану центрĕн ертўçи Валентина Петрова.

Унччен фойере урамри пек сивĕ пулнă. Çурта газ кĕртнĕ пулин те ăшă тытăнса тăман. Ĕç пўлĕмĕсенче, залра çынсем хулăн тумтирпе ларнă. Халĕ чечек ешĕрет, çутă, таса.

Укçа-тенкĕ залри ларкăчсене çĕнетме çитеймен. Çапах вĕсене майĕпен улăштарса пырасшăн.

Çĕнелнĕ çурт ял çыннисен кăмăлне те улăштарать. Нумаях пулмасть кăнаха çамрăксем те, аслисем те вăтанмасăрах фойере чĕлĕм мăкăрлантарнă, хăвел çаврăнăш шĕкĕлченĕ. Хаяр шĕвек сыпакансем те тупăнкаланă. Культура çуртне мар, хупаха пуçтарăннă тейĕн. Халĕ вара лура-тăру урăхла.

– Илемлĕ вырăна çынсем тирпейлĕ тытма тăрăшаççĕ. Ўсĕр килекен сахал. Вĕсене асăрхасан пултаруллă çамрăксем çийĕнчех урама тухма ыйтаççĕ. Залра ларкансем ăшă тумне хывма пуçларĕç. Пурте хăйсене йĕркеллĕ тытма тытăнни сисĕнет. Хăтлă, ăшă çĕрте хамăрăн та ĕçлес килет, кăмăл çĕкленет, – терĕ Валентина Ильинична.

Кану çуртĕнче 19 кружок, çитĕннисем те, ачасем те алă ĕçне хăнăхаççĕ, ташлама-юрлама вĕренеççĕ. Иртнĕ çул драма кружокне халăх театрĕн ятне панă. Ятарлă режиссер-постановщик пур. Ватăраххисем вара хора çўреме юратаççĕ.

– Культурăпа кану çурчĕсен халĕ хăйсен те укçа тумалла. Хулара, район центрĕсенче ку енĕпе çăмăлрах пулĕ, ялта йывăр. Пысăк мероприятисене билетсемпе кĕртетпĕр. Çын пуçне 20-30 тенкĕ кайса ларать. Пĕр енчен хаклă мар темелле. Анчах çемьепе килекенсен кĕсйине самай çўхетет. Ял çыннин шалăвĕ пĕчĕк-çке. Тата мероприятисене вĕçĕмсĕр укçалла ирттерни халăха хамăртан, культурăран сивĕтни кăна, – палăртрĕ Влентина Петрова.

Лариса АРСЕНТЬЕВА.

ФЕНОМЕНАЛЬНЫЙ «ДОКТОР» ВОЗВРАЩАЕТ ЗДОРОВЬЕ

Резервные возможности организма огромны, только мы не умеем ими пользоваться.
И.П. НЕУМЫВАКИН, профессор.

ВОЗРАСТ – ЭТО НЕ ДИАГНОЗ И НЕ ПРИГОВОР!

Что мы часто слышим в кабинете у врача, жалуясь ему на плохое самочувствие? – «Ну что Вы хотите!? Это возраст!»

Вы убиваете целые дни на походы по врачам в надежде на излечение, а Вам даже не могут поставить правильный диагноз. Выпишут тонну лекарств, на покупку которых не хватит всей Вашей пенсии или зарплаты – вот и все лечение. Вам это подходит?

Рано или поздно любой нормальный человек задумывается о сохранении или восстановлении здоровья. И в таком важном деле без настоящего помощника не обойтись.

Скажите, а вы задумывались о таком надежном помощнике как **«ФААМ»**? Думаем, не особо. А скорее всего Вы даже не представляете, что это такое. Тогда представьте, что Вам будут помогать сразу четыре «доктора». Эти «доктора» могут заставить Ваш организм «выдавливать» из себя болезни, и Вы получите сразу четыре мощных источника здоровья. Использовать **«ФААМ»** – это означает открыть огромный ресурс возможностей организма. **«ФААМ»** может дать больному человеку то, что тот хочет больше всего – настоящую лёгкость здоровья! «ФААМ» позволяет Вам сделать огромный шаг вперед к здоровью, и Вы сразу выделитесь из огромной толпы посредственных жалобщиков, сетующих на проблемы медицины. Вы можете изменить себя, а **«ФААМ»** Вам в этом поможет!

ПОЧЕМУ «ФААМ-1» ВОЗВРАЩАЕТ ЗДОРОВЬЕ?

Медики всего мира доказали – поражение организма различными болезнями связано в первую очередь с нарушением обменных процессов. Это касается как артритов и артрозов, так и гипертонии и даже аденомы предстательной железы– в общем, всего. И без хотя бы малейшего восстановления этих самых процессов, любое лечение хронических заболеваний обречено на провал. В лучшем случае Вы получаете временное облегчение, за которым следует лишь ужесточение заболевания. И ничего удивительного в этом нет. Борьба с симптомами никогда не считалась лечением. **«ФААМ»** действует абсолютно иначе!

ЧЕМ ЖЕ УНИКАЛЕН ПРИБОР «ФААМ-1»?!

Метод лечения, который лежит в основе разработки прибора **«ФААМ-1»**, обладает эффектом саморегуляции и восстановления человеческого организма. **Ученым-физиотерапевтам Санкт-Петербурга, под руководством профессора В.В. Кирьяновой,** удалось совместить самые эффективные методы восстановления обменных процессов, поместив их в один небольшой прибор для домашнего использования.

При этом управление прибора сделали очень простым. Всего две кнопки с подробной инструкцией.

АППАРАТ «ФААМ-1» – ВАШ ЛИЧНЫЙ МЕДИЦИНСКИЙ ЦЕНТР

«ФААМ» уникален настолько, что, восстанавливая нарушенные процессы организма, он лечит не только одно какое-то выбранное Вами заболевание, а оздоравливает весь организм.

ПОКАЗАНИЯ К ПРИМЕНЕНИЮ:

- гипертония, стенокардия, реабилитация после инсульта и инфаркта
- артрит, ушибы, гематомы, растяжение, остеоартроз, полиартрит
- заболевания кожи и полости рта, органов дыхания, уха, горла, носа
- невралгия, неврит, остеохондроз
- аденома предстательной железы, простатит

КАК ИСКУССТВЕННЫМ СПОСОБОМ ВОССТАНОВИТЬ ОБМЕННЫЕ ПРОЦЕССЫ И ВЕРНУТЬ СЕБЕ ЗДОРОВЬЕ И МОЛОДОСТЬ?

Комплексное воздействие аппарата «ФААМ-1» на рефлекторные точки и зоны, которые отвечают за работу внутренних органов, приводит к потрясающим результатам лечения.

Магнитный поток	Импульсный ток низкой частоты	Красный монохромный поток	Вибровоздействие
- нормализует давление	- снимает любую боль	- снимает нервное напряжение	- оказывает массажное воздействие
- заживляет ушибы, порезы и раны	- укрепляет нервную систему и мышцы	- улучшает кровообращение	- восстанавливает структуру тканей

Сочетание современных методов физиотерапии улучшает работу иммунной, сосудистой, нервной и эндокринной систем организма. Стимуляция кровообращения приводит к улучшению питания органов, повышению содержания кислорода в тканях, улучшению обменных процессов и повышению иммунитета.

Аппарат имеет Сертификат соответствия и Регистрационное Удостоверение Министерства Здравоохранения РФ. Прибор прошел все медицинские испытания.

СПЕШИТЕ ЗАКАЗАТЬ "ФААМ-1" ПО ТЕЛЕФОНУ: **8(937) 873-52-55, 8(84235)60-100** (8.00-20.00 время московское)
ЗАКАЖИТЕ "ФААМ-1" ПОЧТОЙ: **433504, г. Димитровград, а/я "ФААМ", Е-25**
Цена "ФААМ-1" до 31 декабря по акции **2990 р.** + 350 р. (стоимость доставки по РФ)+ почтовый сбор 2%
Блок питания к "ФААМ-1" в комплект НЕ входит. Цена блока - **490 руб**.
Оплата при получении. В заявке укажите ФИО, количество, индекс, адрес и телефон РАЗБОРЧИВО.

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКУНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

Реклама. ИП Пимонов Александр Юрьевич. ЕГРИП 308730226600012. ИНН 730200056249. Рег. уд. № ФСР 2010/07421 от 22.04.10.

Ветерансене – çурт

ЧР строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – 2005 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕ хыççăн Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин 5603 ветеранĕ хăйсене пурăнмалли çурт-йĕр кирлине пĕлтерсе черете тăнă. Кăçалхи чўк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне патшалăх пулăшнипе 5402 ветеран пурăнмалли условийĕсене лайăхлатнă. Черете тăнă 206 ветеран çитес вăхăтра свидетельство илес ĕмĕтпе пурăнать.

